сательсен биографийĕпе творчествинче халиччен пĕлсех кайман ҫĕнĕ фактсене те тупатпăр.

Мĕн калани И. Кузнецов йăвашланнă, унăн критика хĕҫĕ мăкалнă тенине пачах пĕлтермест, вăл малтанхи пекех принциплă. «Паллах,— вулатпăр кĕнекере,—тишкерни вăл, тĕп-тĕрĕс пулсан та, кирек камăн чĕрине те тивсе витерет. Тепĕр тесен, чĕрене витмен тишкерӳ — ним те мар. Ҫавăнпа тишкерӳшĕн малтан кулянни тĕлĕнтермест, вăл тĕрĕссине ăнланса ăса илни савăнтарать».

И. Кузнецовăн шухăшĕ-вывочĕсем мĕнле улшăнса пыни, кĕнекене хронологи тăрăх йĕркеленĕ пулсан, татах уҫҫăнрах курăнатчĕ. Шел, апла туман. Пĕр вăхăтрах ҫырнă статьясене тĕрлĕ вырăнта панă. Автор, хăйĕн нумай ҫулсем хушшинче тунă ĕҫĕсене пичетлесе кăларнă чухне, чылай маларах каланă шухăшсем пирки халĕ мĕн шутланине те, вĕсене халĕ мĕнле ăнланмаллине те каласа хăвараканччĕ. Ҫапла туни кĕнекен пĕлтерĕшĕпе хакне ӳстернĕ кăна пулĕччĕ. «Саманапа литературăра» ку ҫук вара.

Литературăна тарăннăн тĕпчени, унти пулăмсен ăшчиккине уҫса пани критик пуріннă вăхăтшăн кăна мар кирлĕ. Критик ҫырнисенче пысăк пĕлтерĕшлĕ содержанипе шухăш пулсан, унăн пĕтĕмлетĕвĕсем ӳлĕм те усăллă пулаҫҫĕ. И. Кузнецовăн чылай ĕҫĕсем паянхи куншăн та юрăхлă. Вăл 1958 ҫултах ҫырнă «Чăваш литературине мал енне» статйинех илер-ха. Критик «амурла, мещенле юрату поэзийĕ сарăлни», «пуш параппанла риторикăпа айкашни» ҫинчен ҫырни, «хăшпĕр ҫамрăк поэтсем пуш чечекле пулаҫҫĕ, ҫитменнине, сăпайлăха ҫухатса, аслăраххисене кура, каппайланма тытăнаҫҫĕ» тесе калани халĕ кивелмен. Ҫамрăк авторсемпе ĕҫлессине вăйлатасси ҫинчен Постановлени тухнă хыҫҫăн хăшĕсем ҫакна «пире ирĕк пачĕҫ» тенĕ пек ăнланчĕҫ те хăйсем ҫырнин пахалăхне пăхмасăр-курмасăр редакцисене сĕнме тытăнчĕҫ.

«Саманапа литература» кĕнекери хăшпĕр ҫитменлĕхсем пирки каласа хăварас килет. Уйрăм статьясенче якатсах ҫитермен пуплевсем, чĕлхе шăйрăкĕсем тĕл пулаҫҫĕ. Тĕслĕхрен, акă: «Ҫакăнта ĕнтĕ пирĕн тишкерӳн тапкăҫĕ» (36 стр.), «Чăваш писатель-фронтовиксен ҫырнисенче чăвашлăх палăрмапа пĕрех» (90 стр.), «Сăнамалăх хăшпĕр поэтсене хыпашласа пăхса тухар» (102 стр.). Ак ҫак пуплеве тата кам мĕнле ăнланма пултарĕши?—«Тишкерӳ час-часах туратсене ярса тытса пĕтернине вĕҫерсе ярать» (104 стр.). Хăшпĕр ҫĕрте статьясене сыпăкăн-сыпăкăн пайласа тухнă та шухăшĕсене тĕплĕн каласа паман, тезис пек каланипех ҫырлахнă. «Литературăн нацилĕх форми ҫинчен» статьян «Хускатнă ыйту ҫинчен КПСС Программи мĕн калать» пайĕнче Программăран вăрăм цитата илнĕ те ҫакăнпа сăмаха вĕҫленĕ.

Литературăри нациллĕ хăйевĕрлĕх, нациллĕ колорит, патриотизмпа наци мăнаҫлăхĕ ҫинчен те И. Кузнецов сахал мар ҫырчĕ. Пĕтĕмĕшпе илсен, ҫак пысăк пĕлтерĕшлĕ ыйтусене вăл тĕрĕсех ăнлантарса парать. Ҫакна ҫеҫ каласа хăварасшăн: вĕсем самай кăткăс ыйтусем, кунта пурне те татса панă теме ҫук-ха. Тата кирек мĕнле ыйту та пурнăҫ улшăннăҫемĕн хăйĕн ку е тепĕр енĕпе тухса тăрать.

Нациллĕ хăйевĕрлĕх ҫинчен сăмах пуҫарса, И. Кузнецов ăна ытларах чăваш халăх пурнăҫĕн историллĕ условийĕсенче курать, ҫак уйрăмлăх литературăра, эстетикăра мĕнле палăрнине тĕплĕнех тишкермест. Ҫавах ҫак ыйту пирки сăмах хускатса, вăл усăллă ĕҫ турĕ, ыттисене те ку ыйту ҫине тимлĕрех пăхтарчĕ. Ҫакă паха та.

Ип. ИВАНОВ.

●




# ПРОЗĂЛЛĂ САВĂСЕМ, КАЛАВСЕМ, ТĔРЛĔНЧĔКСЕМ

Вулакансем Валем Ахун (Валентин Максимов) ятне чылайранпах пĕлеҫҫĕ. Вăл йĕркелесе кăларнă балладăсемпе халăх юррисене, ача-пăча сăввисене («Чĕвĕл-чĕвĕл чĕкеҫĕм») халăхра килĕштерсе вулаҫҫĕ. «Шурă акăш» ятлă кĕнекине те ăшшăн кĕтсе илчĕҫ. Халĕ, акă, пирĕн алăра Валем Ахунăн тепĕр кĕнеки. «Хăтлă ҫурт» ятлă вăл. Унта—ҫыравҫăн прозăллă сăввисем, калавĕсемпе тĕрленчĕкĕсем.

Прозăлла сăвăсене илсен, вĕсем унта пĕр-пĕринпе хытă шăнăрпа ҫирĕпленсе, ҫыхăнса тăраҫҫĕ. Ячĕсенех асăрхăр-ха: «Тăван ҫĕрĕмшывăм», «Тăван чĕлхе», «Хăтлă ҫурт», «Сăрнайпа палнай»... Автор тинĕсрен тинĕсе саралса выртакан аслă ҫĕршывăмăр ҫĕр те пĕр чĕлхеллĕ халăха туслă йыша пĕрлештернине савăнать, мухтанать унпа. Кăнтăр енче унăн—нар илемĕ, ҫурҫĕрте—алмаз илемĕ, тухăҫра—ылтăн-кĕмĕл илемĕ, анăҫра—ĕнчĕ-мерчен илемĕ. Ҫыравҫă хăйĕн юратнă халăхĕн, ялйышĕн йăла-йĕркисене те аван кăтартса хăварать. Авалхи йăла пур ман ентешĕмсен, тет вăл. Пĕр ҫуртран тепĕр ҫурта уйрăлса тухнă чух, ҫывăх тăванĕсем, кӳршĕаршăсем ҫĕнĕ пӳрте пуҫтарăнаҫҫĕ. Йăхри хисеплĕ ватă ҫын сăмах калать:

«...Вут куҫĕ ку ҫуртра
Нихăҫан ан сӳнтĕр,
Ялан амаланса тăтăр.
Паян эпир ҫĕнĕ ҫурт хăтлатпăр,
Паян эпир ҫĕнĕ кăвар
чĕртетпĕр!..»

Автор хăйĕн прозăллă сăввисенче хăйсемшĕн çеç мар, халăхшăн пурăнакансене, телей кÿрекенсене мухтать. Çакăн пек çынсемшĕн çунатланнă чăваш симфонине хаклать: «Чăваш симфонийĕ... Ăна итленĕ чухне куçăм умне юмахри Сарă кун çĕршывĕн илемĕпе çиçекен Чăвашстанăм, унăн йăмраллă ялĕсем, шăнкăр-шăнкăр çырмисем, ĕшнисемпе пыллăхĕсем тухаççĕ. Унти кашни ешĕл йывăç-курăк, кашни тулли пучах, кашни çулçă Чĕрĕлĕх хăвачĕпе çиçет. Эпĕ ăна ĕмĕрлĕхех чĕрем çумĕнче усрасшăн, куçăм умĕнче тытасшăн...»

В. Ахунăн калавĕсенчи тĕп геройсем вара—паянхи, пирĕнпе юнашар çÿрекен, ĕçлекен çынсем, тăван халăхăмăрăн ырă эткерĕсем. Вĕсем хăйсен шухăш-кăмăлĕсемпе, айăп-йăнăшĕсемпе, ĕçĕ-хĕлĕпе вулакан умне тухса тăраççĕ. Мухтамаллине мухтать автор, хурламаллине—хурлать. Тĕксе, йĕкĕлтесе илмеллине вара «Чике тăршшĕ хутаç...» кĕске шÿтсен пуххинче аван йĕркеленĕ. Унти тĕп герой—Кукша Чакан. Хут çинче унăн ячĕ, чиркÿре шыва кĕртнĕ тăрăх, Иван пулнă, ял çинче ăна Чакан тесе чĕннĕ. Юмах-сăмах юптарма юратнăран, ял халăхĕ ун ячĕ çумне тата «Кукша» сăмах хушнă, тет автор. Çак аптăраман чăваш пупсемпе пуянсенчен, куштансемпе хыткукарсенчен, патша тÿре-шарисенчен куç умĕнчех йĕкĕлтесе кулать. Пĕррехинче вăл Сĕвекасси пуянĕ патĕнче çирĕм çăкăр кĕрекен кăмака тăвать. Ара, ĕçленĕ-тĕк, пăртак çиесех пулать. Чакан чăкăтне çăкăр чĕлли çине хурса çиме тытăнать. Çакна курсан, пуян хыпăнса ÿкет.

— Асту, Чакан, асăрханарах... Апла хутăштарсах ан çи-ха, вару ыратĕ,—тесе калать, тет.

— Ун пек чухне вăл, хуçа, çиеккеннин ыратмасть, «сăйлаканнин» çеç ыратать,—тесе хуравларĕ, тет, Чакан. Унăн шăртлă-йĕплĕ каларăшĕсемпе, такмакĕсемпе автор ку кĕнекере вырăнлă усă курнăн туйăнать.

Кĕнекери тĕрленчĕксенче вара—çĕнĕ самана çыннин революциллĕ хĕмĕ, паянхи ĕççыннин пархатарлă шухăш-кăмăлĕ. Пурнăçне шеллемен, чăрсăр пĕрхĕт пек мăнаçлăн пăхакан çамрăк поэт-революционер Тайăр Тимккипе юнашарах—иртнĕ вăрçăра Днепр сăртлăхне ĕмĕрлĕхех выртса юлнă Семен Андреев. Унтах—цементпа, кирпĕч тусанĕпе вараланнă спецовка тăханнă, пĕтĕм çĕршывĕпе паллă бригадир-строитель—СССР Верховнăй Совечĕн депутачĕ Михаил Степанов.

Çакăн пек хисепе тивĕçлĕ çынсем çинчен çырать те ĕнтĕ В. Ахун хăйĕн кĕнекинче.

Л. МАРТЬЯНОВА.

# ЧУН СУКМАКĔСЕМ




«Юрату сăмсахĕ»—çапла ят панă хăйĕн çĕнĕ кĕнекине Хветĕр Агивер. Унта—пĕр повеçпе пилĕк калав.

Мĕнле темăсем хускатать-ши кĕнекере писатель, мĕн ытларах кăсăклантарать-ши ăна? Паллах, çак ыйтусем канăç памаççĕ вулакана. Ан васкăр. Акă мĕн çырнă «Юрату сăмсахĕн» кĕске аннотацийĕнче: «Этем тĕнчере пĕрре пурăнать. Пурăннă чух вăл телейне те, кулянăçне те сахал мар курать. Анчах та этеме çут тĕнчере ĕçпе тан илемлетсе тăракан пархатарлăран та пархатарлă япала вăл — юрату. Юрату этеме паттăрланма хавхалантарать, унăн чун-чĕрине çунатлантарать, савăнăç пиллет. Юрату пулсан, кас-кас килсе хупăрлакан пурнăç шартлами те хĕвеллĕ—акă Хветĕр Агиверăн çĕнĕ кĕнекине кĕнĕ произведенисен тĕп шухăшĕ».

Кашни хайлавах кăсăклă пуçланать çыравçăн. «Кин пуласси паллă-ха...» калавра, акă, ялта пĕччен кĕштĕртеткелесе пурăнакан Пăлаки кинемей пĕр иржине тĕлĕкпе вăранса каять. Кинемей лупас хыçне ясмăк акнă пек. Çав ясмăк лаптăкĕ тавра шурă мăйлă хур ами какăлтатса çÿрет пек, анчах Пăлакипе ывăлĕ ăна тем чухлĕ тăрăшсан та тытаймарĕç пек.

Мĕне пĕлтерчĕ-ши ку тĕлĕк, текелесе пахчана çĕрулми кăларма тухать карчăк. Кĕçех хулара пурăнакан ывăлĕн туй пулмалла, çавăнта кайиччен пахчари ĕç-пуçсене пĕтересшĕн вăл. Тăрмашнă-ĕçленĕ май хăй çамрăклăхне аса илет Пăлаки, унтан шухăшĕсем каллех ывăлĕ çине куçаççĕ. Хулана ĕçлеме кайнă та лешĕ—яла пĕрре те килмест, вăтăмăшне пулăшас тĕллев çук унăн. Хăйĕн пăшăрханăвне пахчана кĕнĕ пĕр палламан çамрăк хĕре каласа парать вăл, анчах усалпа асăнмасть Çерукне. «Çук ĕнтĕ, пулăшман пултăр, ун уксăпе, хăйпе хăй йÿнеçкелесе пурăнсан та сăпаççип. Ман пирки мĕн пăшăрханмалли, эп пурăнатăп-ха, пенси илетĕп, турра шĕкĕр...»—тет вăл çав хĕре.

Произведени Пăлаки кинемей палламан хĕр хăй кинĕ пулассине пĕлнипе вĕçленет.

Калава вуласа тухсан, пуçра тĕрлĕ шухăш çуралать. Чăн та, пур-ха пирĕн пурнăçра тăван киле, тăван вырăнсене манакансем. Мĕнре-ши çакăн сăлтавĕ? Кăна автор вулакана уçса паман. Тепĕр тесен, кирлех-ши вăл? «Çакăн сăлтавĕ кунта», «куçапла пулать» тесе шавлама? Произведени вулакана шутлаттарма пултарнипе паха.

«Юрату сăмсахĕ» повеçре те автор мораль ыйтăвĕсене хускатать. Икĕ йĕрпе аталанса пырать кунта сюжет: пĕр енче—Тамарăпа Георгий, тепринче—Валентинпа Тамара. Мĕнле лару-тăрура сăнлать вĕсене писатель? Повеçĕн тĕп конфликчĕ мĕнре? Çак тата ытти нумай ыйтусем çине «Юрату сăмсахĕне» палăртан ответ тупма пулать.

Ю. ВАНЮКОВ.